Эрехре-ши сăлтавĕ?

# Саккуна пăсрăн – явапне тыт

***Пурнăçра, шел пулин те, ыррипе пĕрлех усалли те юнашарах çӳрет. Илерха, тĕслĕхрен, эрех ĕçессипе иртĕхессинех. Ку ыйту паян пур çĕрте те çивĕч тăрать. Эрехе пула миçе çемье арканать, мĕн чухлĕ çыннăн кусçулĕ тăкăнать, миçе 100 ача телейлĕ ачалăх мĕнне пĕлмесĕрех ӳсет. Тунă преступленисенчен ытларахăшĕ те пуçа çак пăтранчăк шĕвекпе минретнĕ хыççăн пулнă.***

***Район администрацийĕ алкоголизма тата алкоголь суррогачĕпе спирт пур шĕвеке саккуна пăсса сутассине хирĕç кĕрешессине яланах мала хунă. Кăçалхи иккĕмĕш çур çул валли ку енĕпе ятарлă ĕç планĕ йышăннă. Унпа килĕшӳллĕн кашни эрне кун икшер ял тăрăхĕнче профилактика кунĕ иртет. Унта район администрацийĕн ĕçченĕсемпе шалти ĕçсен пайĕн сотрудникĕсем хутшăнаççĕ. Вĕсем ялсенчи ăнăçсăр çемьесене çитеççĕ, çавăн пекех ирĕкрен хăтарнă вырăнсенчен килнисемпе, шалти ĕçсен пайĕнче учетра тăракан çул çитмен çамрăксемпе тĕл пулаççĕ, ял хушшинчи тирпейлĕхпе интересленеççĕ. Йĕркене пăсакансем тĕлĕшпе административлă майпа явап тыттарма протоколсем çыраççĕ. Районти шалти ĕçсен пайĕн пуçлăхĕн çумĕ – обществăлла хăрушсăрлăх милицийĕн пуçлăхĕ В. А. Григорьев калана тăрăх, кашни ял тăрăхĕнчен право йĕркине административлă майпа пăснăшăн 15-рен кая мар çырăнаççĕ вĕсем.***

***Районти йĕрке хуралĕнче тăракансем ку таранччен тата мĕн туса иртернĕ эрех-сăрапа иртĕхессине хирĕç? Çакăн çинчен каласа пама ыйтрăм та ĕнтĕ Виталий Алексеевича.***

– Чи малтанах çакна палăртмалла, кăçалхи 7 уйăхра административлă майпа право йĕркине пăснă 4422 тĕслĕхе тупса палăртнă. Иртнĕ çул ку кăтарту 3820-пе танлашнăччĕ. Çав шутран хулиганла пĕчĕк ĕçсем тунăшăн 230 çынна явап тыттарнă. Обществăлла вырăнта сăра тата эрех ĕçекенсем те тĕл пулсах тăчĕç çак хушăра. Çакăншăн 113 çын тĕлĕшпе право йĕркине административлă майпа пăсни çинчен калакан кодексăн 20 статйин 1 тата 2-мĕш пайĕсемпе килĕшӳллĕн протоколсем çырнă. Обществăлла вырăнта ӳсĕр çӳрекенсен йышĕ тата та пысăкрах: 1351 çынна ответ тыттарнă.

**– Виталий Алексеевич, эрехе çынсем ытларах магазинсенче туянаççĕ. Суту-илӳ точкисенчен алкоголь продукцийĕ сутассипе йĕркене пăсакансем çук-и?**

– Ку енĕпе çĕрле тата çĕрĕпех ĕçлекен магазинсенче тăтăшах тĕллевлĕ рейдсем ирттеретпĕр. Район пуçлăхĕн 2002 çулхи декабрĕн 20-мĕшĕнчи 953-мĕш номерлĕ йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн алкоголь тата спирт пур шĕвексене вĕрентӳ, сиплевпе профилактика тата культура учрежденийĕсенче сутма чарнă. Уйрăмах – 18 çула çитменнисене. Çул çитмен çамрăксене эрех-сăра сутнăшăн вара 8 протокол çырнă. Çав шутран 2 тĕслĕхне август уйăхĕнче тупса палăртнă. Пĕтĕмпе вара суту-илӳ правилисене пăснăшăн 48 çынна явап тыттарнă.

**– Уйрăм çынсем сăмакун туса сутасси те час-часах тĕл пулать. Саккуна хирĕçле çак «бизнеса» чарса лартас тесе мĕн тăватăр?**

– Çав çынсене тупса палăртас, районти шалти ĕçсен пайĕнче учета тăратас тата вĕсене явап тыттарас тĕллевпе кашни эрнерех ялсенче рейдсем ирттеретпĕр. Паянхи куна сăмакун туса тата спирт пур шĕвеке сутакансем пирĕн патра 124 çын учетра тăрать. 7 уйăхра сăмакун туса тата спирт пур шĕвеке сутнăшăн 50 çынна Чăваш Республикин саккунĕн 16-мĕш статйипе килĕшӳллĕн явап тыттарнă. Кун йышшисем ку вăхăтра пĕлтĕр милици аллине 44-ăн çакланнăччĕ. Пĕтĕмпе вара 7 уйăхра 12,250 литр этил спиртне, 7,5 литр сăмакун тата 125 литр спирт пур шĕвеке туртса илнĕ.

Ăçта эрех – унта вăрçă-харкашу. Пуçа çак усал шĕвекпе минретнĕ хыççăн килте, йăлара харкашу кăларнăшăн вара асăннă саккунăн 19-мĕш статйипе килĕшӳллĕн çулталăк пуçланнăранпа 149 протокол çырнă.

**– Килте эрех сутса укçа «çапакансене» çирĕпрех майпа явап тыттарнă тĕслĕхсем пур-и?**

– Килте сăмакун туса тата спирт пур ытти шĕвеке сутнăшăн РФ УК 238-мĕш статйипе килĕшӳллĕн уголовнăй ĕç пуçарма прокуратурăн следстви пайне 8 материал ярса патăмăр. Вĕсенчен пĕринпе уголовнăй ĕç пуçарнă ĕнтĕ. Паянхи куна ыттисемпе тĕрĕслев ĕçĕсем пыраççĕ.

**– Алкоголизма хирĕç кĕрешесси паян чи çивĕч ыйтусенчен пĕри пулса тăрать. Тата мĕнле ĕçсем туса ирттеретĕр ку енĕпе?**

– Спирт пур шĕвеке сутакансене тупса палăртас тесе рейдсем ирттернипе пĕрлех эрех ĕçсе час-час право йĕркине пăсакансене контроллесех тăратпăр. Руль умне ӳсĕр ларакансем тĕлĕшпе те тивĕçлĕ мерăсем йышăнатпăр. Алкоголь продукцине туса кăларассипе сутассине те пĕрре те куççран вĕçертместпĕр. Обществăлла вырăнсенче ӳсĕр çӳрекенсене тытса чаратпăр тата ытти те. Çак ĕçе общественноçа та активлăн явăçтарма тăрăшатпăр.

**– Тавах, Виталий Алексеевич, калаçушăн.**

**Л. ПАВЛОВА калаçнă.**

Ӳнер

# «Илемри» илем – пурин валли те

– Сирĕн патра, Мăн Сĕнтĕрте, православи чиркĕвĕ пур. Ку – çынсемшĕн хăйне евĕр храм. Халĕ вара кунтах тепĕр храм уçăлчĕ – искусство храмĕ, – çакăн пек сăмахсемпе палăртрĕ район пуçлăхĕн çумĕ, культура тата архив ĕçĕсен пайĕн пуçлăхĕ А.Е. Андреева «Илем» картина галерейи уçăлнине.

Йышлăн пуçтарăнчĕç Мăн Сĕнтĕрсем çак пысăках мар капăр çурт умне иртнĕ кĕçнерни кун. Илья Афанасьев художникăн выставки хăй аллипе купаланă, кайран хăй илемлетнĕ çуртра кĕтсе илчĕ хăнасене. «Янаш» халăх ансамблĕ вара çак саманта сум кĕртрĕ.

Тăван вырăнсен сăнĕсем, чуна пырса тивекен, çав хушăрах лăпкăлăхпа савăнăç туйăмне парнелекен ӳкерчĕксем чылай хатĕрленĕ ăстаçă. Калăпăшĕпе те тĕрлĕрен вĕсем, сăрă тĕсĕсен вылявĕпе те. Анчах та пурне те пĕр алăпа туни палăрать. Художник ăста пулсан, унăн ӳкерчĕкĕсене те уйăрса илме пулать çав.

Çĕр ытла ĕç Илья Петровичăн. «Пĕр пине çитеретĕп», – тет вăл çирĕп тĕллев пурине палăртса. Хăйĕн тĕллевне, мĕн тума палăртнине çине тăрсах пурнăçлама тăрăшни унăн ырă енĕсенчен пĕри пулнине мăшăрĕ Ольга Моисеевна та çирĕплетет. Çапла пулмасан галерея çурчĕ те çĕкленмĕччĕ. Унăн иккĕмĕш хутĕнче вара художникăн ĕç пӳлĕмĕ вырнаçнă.

Новая урамри çĕнĕ çурта хута янă ятпа саламлама ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Г. Мазиков та, «Сундырь – Хлеб» чикĕллĕ яваплăхлă общество директорĕ Л. Ильгечкин та çитрĕç. Сăмах май, Леонид Геннадьевич пĕр виçĕ çул каялла Швеци çĕршывĕнчен килнĕ хăнасене Илья Петровичăн ӳкерчĕкне парнеленине аса илчĕ. «Пирĕн художника ют çĕршывра та пĕлеççĕ», – терĕ вăл.

Мăн Сĕнтĕр тăрăхĕ хастар та талантлă çынсемпе пуян. Акă Илья Петрович Афанасьев та шкул ачисен пултарулăхне ӳстерес тесе 1991 çултанпах Муркашри ача-пăча искусство шкулĕн Мăн Сĕнтĕрти уйрăмĕн ертӳçи тата преподавателĕ пулса тăрăшать. Çакнашкал маçтăр патĕнче вĕренни ачасене, паллах, малалла туртăнма хистет те.

Илья Петрович хăйĕн выставкисене малтанах Мăн Сĕнтĕрти ял библиотекинче йĕркеленĕ. Халĕ вара унăн ĕмĕчĕ пурнăçланчĕ – унăн хăйĕн галерея. Иртенçӳрене çакăнта кĕрсе тухма яланах кăмăллă пуласси вара пĕртте иккĕлентермест. Мĕншĕн тесен галерея та, кунти ӳкерчĕксем те – талантлă çын чунне парса тунăскерсем.

**Н. НИКОЛАЕВА.**




ГИБДД пĕлтерет

# Çул-йĕр çинче тимлĕх кирлĕ

Августăн 16-мĕшĕнче çур çĕр иртни вунă минутра шалти ĕçсен пайне Шомик ялĕ çывăхĕнчи çул çинче инкек пулни çинчен шăнкăравласа пĕлтереççĕ. Оперативлă следстви ушкăнĕ тӳрех çула тухать.

Августăн 15-мĕшĕнче 24 сехет çитеспе, чăнах та, çак ял çывăхĕнче çăмăл машина икĕ çынна çапса кайнă-мĕн. Водителĕ вара тарса çухалнă. Çуран пыракансем иккĕшĕ те Шупашкар районĕнче çуралса ӳснĕскерсем, иккĕшĕ те 21 çулта. Пĕри вырăнтах вилсе каять, теприне васкавлă медицина пулăшăвĕн больницине ăсатаççĕ. Анчах унăн пурнăçĕ те татăлать.

Водителĕ кам пулни паллă ĕнтĕ. Халĕ Уголовнăй кодексăн 264 статйипе уголовнăй ĕç пуçарас ыйту тăрать.

Çапла çĕрлехи вăхăтра çул çинче çамрăксем хутшăннипе сахал мар инкек-синкек тухать. Уйрăмах йĕпе-сапа вăхăчĕ çитиччен. Çул çитменнисем те каникул вăхăтĕнче урамсенчен часах саланманни паллă.

Часах вĕренӳ çулĕ те çитет. Водительсен те, ачасен те çул çинче тимлĕ пулмалла. Халĕ шăпах «Асăрханăр – ачасем!» операци вăхăчĕ. Вăл августăн 17-мĕшĕнче пуçланчĕ те сентябрĕн 13-мĕшĕччен тăсăлать. Ачасемпе çамрăксене тата водительсене тепĕр хут çулйĕр çинче асăрхануллă пулма ыйтас килет.

**А. ЩЕРБАКОВ,**
**патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекци уйрăмĕн инспекторĕ.**

## Пĕлтерӳсем. Объявления

**Вниманию руководителей ООО!**
**Всем ООО, зарегистрированным до 01 июля 2009г., необходимо пройти перерегистрацию – привести учредительные документы в соответствие с Федеральным законом №312 от 30.12.2008г.**
**Срок перерегистрации - до 01 января 2010г.**
**ООО «Виктория»**
**Адрес: ЧР, с. Моргауши, ул. Мира, д.6, офис 119 (здание администрации района);**
**г. Чебоксары, ул.Т.Кривова, д.4а.**
**Тел.: (83541)62-4-43; (8352)22-10-60.**
**Моб.: 446-448. 4-5.**

**Блоки керамзитобетонные 20х20х40, бетон, раствор, песок, гравмасса, щебень, асфальт, ЖБИ.**
**Тел.: 8(8352)52-95-95, 8-927-668-84-40. 18-40.**

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.**
**Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84. 3-5.**

**Продаю овец романовской породы. Цена договорная. Обращаться: Ядринский р-н, д. Янымово.**
**Тел.: 8-919-660-38-06. 1-3.**




**Предприниматель Еропанов Н.В. продает компьютеры по оптовым ценам. Предоставляет льготный кредит по Президентской программе «Компьютер в каждый дом». Устанавливает спутниковые антенны «Триколор». Тел.: 62930, 89520236034, 89176519222 рядом с санэпидстанцией. 2-3.**

**Продаю автомобиль ВАЗ-21099 2004 года выпуска, инжектор, цвет серебристый металик, антикор, подкрылки, сигнализация, музыка LG, MP3, пробег 65 тыс. км., на отличном ходу. Продаю трактор Т-25 с плугом. Тел.: 8-906-387-18-59.**

**1 – 6 уйăхри усрамалли вăкăр туянатăп.**
**Тел.: 8-937-373-32-13.**

**Продаю трехкомнатную квартиру в с. Моргауши площадью 65 кв. м., с индивидуальным отоплением.**
**Тел.: 8-927-842-29-12.**

**Пĕрре пăрулана хура-шурă тĕслĕ ĕне сутатăп.**
**Тел.: 8-903-346-46-84.**

**В салон-парикмахерскую «Дива» (ФСК «Сывлăх») срочно требуются парикмахеры с опытом работы. Заработная плата достойная. Тел.: 8-960-307-50-88.**

**Продаю фундаментные блоки 60х60х2,5 м. в количестве 18 штук, автомобиль ВАЗ-2107-4 2005 года выпуска, тонировка, литые диски, магнитола, чехлы, антикоррозийная обработка, цвет темная вишня. Цены договорные. Тел.: 8-927-866-66-63. Анатолий.**

**Продается имущество и имущественные права СПК «Чемеево» Моргаушского района с начальной ценой предложения 1332500 (один миллион триста тридцать две тысячи пятьсот) рублей. В соответствии п. 2 ст. 179 Федерального Закона от 26.10.2002 г. № 127ФЗ «О несостоятельности (банкротстве)» преимущественное право приобретения имущества должника имеют лица, занимающиеся производством или производством и переработкой сельскохозяйственной продукции и владеющие земельным участком, непосредственно прилегающим к земельному участку должника. Уведомления о намерении воспользоваться преимущественным правом приобретения имущества и предложение по цене приобретения с приложением документов принимаются в течение месяца с даты публикации по почтовому адресу с описью вложения: 428009, Чувашская Республика, г. Чебоксары, п/о № 9, а/я № 42, Парамонову Ю.Н. Конт. тел.: (8352) 41-60-50, 89026610422.**

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды:**
**- категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:271401:952, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, участок расположен в юго-восточной части кадастрового квартала 21:17:271401, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 5932 кв. м.;**
**- категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:271401:953, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, участок расположен в юго-восточной части кадастрового квартала 21:17:271401, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6000 кв. м.;**
**- категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:271401:954, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, участок расположен в юго-восточной части кадастрового квартала 21:17:271401, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6009 кв. м.;**
**- категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:271401:955, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, участок расположен в юго-восточной части кадастрового квартала 21:17:271401, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6001 кв. м.**
**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды, категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:031001:305, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, участок расположен в северо-восточной части кадастрового квартала 21:17:031001, для организации водно-спортивного причала, площадью 810 кв. м.**
**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

**Участники долевой собственности Федорова Раиса Евгеньевна, 19.04.1957 года рождения, проживающая по адресу: Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Пролетарская, д. 15, кв. 52, в 1/2 доле, Крайницкий Сергей Геннадьевич, 19.10.1982 года рождения, проживающий по адресу: Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Р. Зорге, д. 17, кв. 32, в 1/2 доле, сообщают о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Ильинское, на территории землепользования СХПК «Хлебороб», участок расположен в восточной части кадастрового квартала 21:17:021001, площадью 1,24 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.**
**Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 3 адреса:**
**1. Администрации Ильинского сельского поселения.**
**2. Федоровой Раисе Евгеньевне, проживающей по адресу: Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Пролетарская, д. 15, кв. 52.**
**3. Крайницкому Сергею Геннадьевичу, проживающему по адресу: Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Р. Зорге, д. 17, кв. 32.**

Хорнуй ял тăрăхĕн администрацийĕ Хорнуй ялĕнче пурăннă, Ленин яч. хис. хуçалăхра ĕçленĕ Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ механизаторĕ
**Виталий Александрович**
**НИКОЛАЕВ**
вăхăтсăр вилсе кайнă пирки çемйипе тата çывăх çыннисемпе пĕрле чĕререн хурланса пĕлтерет.

**Моргаушская районная газета «Çĕнтерӳ ялавĕ»**

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ» Минкультуры Чувашии.

**За главного редактора В.Л. Шапошников.**
**АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9А.**
**ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 62-1-36, заместитель главного редактора - 62-2-82, бухгалтерия - 62-1-35, отделы: общественно-политической жизни - 62-2-82, экономики - 62-1-38.**
**Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru**

**Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.**
**Свидетельство о регистрации ПИ № ТУ 21-00025 от 26 декабря 2008 года.**

**Объем 1 усл. печатный лист.**
**Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.**
**Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.**

**ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.**
**Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.**
**Дежурный по номеру Шапошников В.Л.**
**Номер подписан 25.08.2009 г.**
**Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.**
**Заказ Тираж 3770.**

Номер набран и сверстан в РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.